Çурхи кун çулталăк тăрантарать

Паха вăрлăх – тыр-пул тухăçĕ

Уй-хире тухиччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Паллă ĕнтĕ, пахалăхлă вăрлăх кăна пысăк тухăç пама пултарать. Ку енĕпе ял хуçалăхĕнче еплерех лару-тăру. Çавăнпа тĕплĕнрех паллаштарма ыйтрăм эпĕ районти ӳсен-тăрана сыхлас енĕпе ĕçлекен агрономран А.С. СЕМЕНОВРАН.

Хальхи вăхăтра рынок тапăнса кĕни чылай йывăрлăх кăларса тăратрĕ. Укçа-тенкĕпе çыхăннă лару-тăру вăхăтĕнче нумай хуçалăхсем йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕç. Çапла вара ял хуçалăх тыр-пулне çитĕнтернĕ çĕрте кирлĕ пек майсем туса пами пулчĕç. Çавна пула нумай хуçалăхсенче тыр-пул илесси ӳссе мар, чакса пырать. Иртнĕ çулта та чылай хуçалăхсенче кирлĕ чухлĕ тыр-пул туса илеймерĕç. Паянхи куна пысăк çитменлĕхсем тыр-пул çитĕнтернĕ çĕрте çаксем пулса тăраççĕ. Уйрăммăн илсен, малтанхи çул мĕнле культура акнине шута илменни, çĕре кирлĕ пек хатĕрлеменни, çавна пула уйсем çум курăкĕпе витĕнсе ларни. Вăрлăх пахалăхĕ кирлĕ пек пулманни, малтанхи çул хатĕрленĕ вăрлăх пачах çукки палăрмаллах йывăрлăх кăларса тăратать. Ӳсен-тăрана кирлĕ пек удобренисемпе апатлантарни, тĕрлĕрен чир-чĕртен çу каçипех пăхса сыватса тăни вара питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Паллă ĕнтĕ, вăрлăх урлă пĕтĕм чирчĕр çуррине яхăн ӳсен-тăрана куçать. Чирлĕ вăрлăх акнине пула тыр-пул тухмасть, чир-чĕр ытларах кăна сарăлать. Паянхи куна акмалли вăрлăх, чăннипех те, тĕрлĕрен чир-чĕрсĕр пулмасть те. Пур акмалли вăрлăх çинче те 3-4-шар тĕрлĕ чир-чĕр тупса палăртнă. Çак паллăсене нумай пулмасть кăна тĕрĕслеттернĕ Республикăри ӳсен-тăрана сыхлас енĕпе ĕçлекен станцин лабораторийĕн кăтартăвĕсем çирĕплетсе параççĕ. Акă, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра çурхи тулă çинче тĕрлĕрен чир-чĕр 86 процент чухлĕ, "Герой" хуçалăхра çурхи тулă çинче 89 процент, сĕлĕ çинче 65 процент, урпа çинче 91 процент тупса палăртнă.

"Оринино" хуçалăхри сĕлĕ çинче 82 процент, çурхи тулă çинче 84 процент, урпа çинче 97 процент чухлĕ тупса палăртнă.

"Свобода" хуçалăхри çурхи тулă çинче 90 процент чухлĕ, урпа çинче 98 процент чухлĕ, урпан тепĕр партийĕ çинче 96 процент чухлĕ чир тупса палăртнă.

"Ударник" хуçалăхри сĕлĕ çинче 80 процент, çурхи тулă çинче 96 процент, урпа çинче 96 процент чухлĕ тупса палăртнă.

Чапаев яч. хис. хуçалăхри çурхи тулă – 96 процент, сĕлĕ – 89 процент, урпа 100 процент чухлĕ тĕрлĕрен чир-чĕрпе сиенленнĕ. Ку кăтартусене ытти хуçалăхсемпе те малалла тăсса кайма пулать.

Çак тĕрĕслеве пĕтĕмлетсе çапла калама пулать, хуçалăхсен пĕр центнер вăрлăх та химилле препаратсемпе имçамламасăр акмалла мар. Уйрăмах специалистсем валли калас килет. Вăрлăхра тĕрлĕрен чир-чĕр 30 процент ытлашши мар пулсан, тĕрлĕрен биологилле препаратсемпе усă курма юрать. Вĕсен шутĕнче «Планриз» шутланса тăрать. Ку препарата Республикăри ӳсен-тăрана сыхлас енĕпе ĕçлекен станци кăларать. Пĕр литрĕ 105 тенкĕ тăрать. Пĕр тонна вăрлăх çине 0,5 литр ярса усă курмалла. Тырăна тымартан çĕрессине пĕтерет. Хальхи вăхăтра хуçалăхсем валли тĕрлĕрен химилле препаратсене çителĕклех сутаççĕ. Çавăнпа та мĕнле препаратпа ĕçлессине хуçалăхра агрономăн суйласа илсе вырăнта кирлĕ пек йĕркелесе ĕçлеттермелле. Чир-чĕре хирĕç кĕрешессинче кирлĕ пек препаратпа усă курмалла.

Вăрлăх тырăна çине тăрсах пур хуçалăхра та имçамламалла. Мĕнле препаратсемпе усă курмалла-ха паянхи кун? Ку ыйту нумай специалиста хумхантарать. Хакĕсем вара нумай хуçалăха тивĕçтереймеççĕ. Çавăнпа та ӳсен-тăрана сыхламашкăн майсем тупма тăрăшмалла. Вăрлăх çинчи чирсене шута илсе кирлĕ пек препаратсемпе усă курмалла.

Çурхи тулăнаТМТД, СП пĕр тонна вăрлăх çине 1,5-2,0 кг, "Виал – ТТ", "ВСК" – 0,3-0,4 кг, «Дививдентстар» 1,0 кг, "Премис", "КС" – 1,2 кг пĕр тонна çине ярса имçамламалла. Шыв пĕр тонна вăрлăх çине 10 литра яхăн пулмалла. Ку препаратсем тулă çинче тĕрлĕрен вутпуççинчен, тымарсем çĕресрен тата ытти чирсенчен сыхлаççĕ. Урпана "Виал – ТТ", «ВСК» – 2,3 кг-т, вăрлăх çине хутăштармалла. Çавăн пекех «Премис-Двести», «Ко» препаратпа имçамлама юрать. Пĕр тонна вăрлăх çине 1.0 кг расхутламалла. Сĕлĕ вăрлăхĕ çинче çавăн пекех «Премис», «КС» пĕр тонна çине 1,5 литр, "Премис Двести", "КС" пĕр тонна çине 0,4-0,5 литр чухлĕ хутăштармалла.

Химилле препаратсем йӳнех мар, çавна шута илсе Республикăри ӳсен-тăрана сыхлас енĕпе ĕçлекен станци "Планриз" препарат кăларать. Çак препарат тымартан çĕрессине, çавăн пекех хура-хăмăр тутăх тата ытти чирсене пĕтерет. Пĕр тонна вăрлăх çине 0,5 литр чухлĕ сирпĕтсе имçамламалла. Ку ĕçе акас умĕн пĕр икĕ кун маларах усă курмалла. Хакĕ 1 литрĕн 105 тенкĕ. Асăннă препарата ял хуçалăх управлени специалисчĕсемпе калаçса, кирлĕ чухлĕ илме пулать.

Вăрлăх имçамланă çĕрте ятарласа хатĕрленĕ, сывлăха тĕрĕслеттернĕ çынсен кăна ĕçлемелле. Хăрушсăрлăх техникипе вĕрентсе паллаштармалла, вĕсене пăхăнса ĕçлемелле. Алăна имçамлама юрамасть. Кашни çыннăн кирлĕ пек ĕç хатĕрĕ пулмалла (респиратор, куçлăх, ятарласа тум-тир, резина атă, перчетке). Тĕрлĕрен химилле препаратсемпе ĕçленĕ чух çулсеренех тухакан каталогра 2007 çулта пур препаратсемпе кăна ĕçлеме юрать. Çак каталогри препаратсене çулсеренех пăхса тухса сывлăхшăн сиенлĕ мар пулсан ĕçлеме ирĕк параççĕ.

Çавăн пекех илнĕ препаратсемшĕн хушса тӳлеççĕ. Тепĕр майлă каласан, химилле препаратсене илнĕ хыççăн кирлĕ хутсене ял-хуçалăх управленине тăратмалла.

Ял-хуçалăх министерствин приказĕпе килĕшӳллĕн вăл списокра пур препаратсемшĕн хушса тӳлеççĕ. Çак хушу 2007 çулхи 12-мĕш мартра 34-мĕш номерпе тухнă. Çавăнпа килĕшӳллĕн республикăра вунă предприятирен е фирмăран илме юрать. Ку ыйтусемпе пĕтĕмпех ял хуçалăх управленине агрономсен уйрăмне пырса е 2-15-31 номерлĕ телефонпа шăнкăравласа пĕлме пулать.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
каласнă.

Ял хуçалăхĕ

Тăрăшу – ӳсĕм çăлкуçĕ

Юлашки çулсенче ял хуçалăх кооперативĕсен ĕçĕсем питех те начарланса пыни, вĕсем панкрута тухас хăрушлăх çивĕчленсе пыни ял хуçалăхĕпе çыхăннă ĕçсенче нумай çул ĕçленĕ çынна питех те пăшăрхантарать. Ял хуçалăх продукчĕсене сутмалли хаксемпе промышленноç таварĕсен, техника, çунтармалли-сĕрмелли материалсем, удобрени, запаслă пайсен хакĕсем хушшинче чăтмалла мар пысăк танмарлăх пулни ял хуçалăх ĕçченĕсем умне чылай йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Ку, паллах, çĕршыв шайĕнче ертсе пыракансем ял хуçалăх политикине тĕрĕс мар тытса пынинчен нумай килет.

Хальхи вăхăтра ял хуçалăхне çĕнĕрен аталантарас енĕпе Раççей правительстви ятарлă çĕнĕ программа йышăннă. Кооперативсене, фермер хуçалăхĕсене тата килти хуçалăхсене аталантарма çăмăллăх кредитсем уйăраççĕ. Ку вăл хальхи рынок йĕркинче ĕçсене çĕнĕлле йĕркелемелли çинчен пурте ăнланаççĕ. Çапах та хăшĕпĕрисем çаплах ĕлĕкхилле çӳлтен тавăрса памалла мар пулăшу кĕтеççĕ.

Йывăрлăхсем пулсан та, пурнăç малаллах шăвать. Паянхи условисенче те ял хуçалăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвакансем сахал мар. Эпир ун çинчен телевизорпа та куратпăр, радиопа та итлетпĕр, хаçатсем çинче те вулатпăр.

Кунта пысăк вăрттăнлăх çук. Хальхи экономика условийĕсенче çĕнĕлле тата тăрăшса ĕçлемелле. Пулăшу, бизнес-плансене кура, ĕçлеме пĕлекенсене кăна параççĕ. Çак ĕçре хуçалăх ертӳçисемпе специалистсенчен нумай килет.

Хуçалăх аталанăвĕнче, уйрăмах выльăх-чĕрлĕхĕн пысăк продукци паракан ăрачĕсене çĕнĕ технологипе аталантарса, уй-хире тухăçлă çĕнĕ сортсем акса, агротехникăн çĕнĕ майĕсемпе тата техникăпа кирлĕ пек усă курсан, ӳсĕмсем пулаççех.

Тепĕр пысăк ыйту вăл ĕçлекенсене ĕç законĕпе килĕшӳллĕн йĕркеллĕ ĕç условийĕсем туса памалла тата ĕçшĕн тӳлекен ĕç укçин калăпăшĕ çынна йĕркеллĕ пурăнмалăх пулмалла. Ĕç тата йăла условийĕсен ыйтăвĕ кирлĕ шайра пулмалла.

Манăн паянхи статьяра Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра çулталăк хушшинчех пулса иртнĕ ырă улшăнусем çинче чарăнса тăрас килчĕ.

Кăçалхи мартăн 14-мĕшĕнче Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх кооператив членĕсен отчетлă пухăвĕ пулса иртрĕ. Манăн кашни çулах çак хуçалăхăн пухăвĕсенче пулма тата пухусене пĕрре кăна мар ертсе пыма тӳр килчĕ.

Иртнĕ çулсенче пуху питĕ шавлă та харкашуллă иртетчĕ. Пĕр çулхине пухун кун йĕркине те пуху пуçлансан хăвăртрах президиумра çырмалла пулса тухрĕ. Темиçе çул ревизи комиссийĕ те ĕçлемен, хуçалăхпа финанс документĕсене никам та тĕрĕслемен, отчет тăвакан та пулман.

Кăçалхи пухăва 2006 çулхи ĕç итогĕсене пăхса тухма кооператив членĕсем клуб туллиех пухăннă. Хуçалăх ертӳçи П.Г Ефимов пухăннисене 2006 çулхи ĕç итогĕсем çинчен отчет туса пачĕ, малашнехи ыйтусене палăртрĕ. Тĕп специалистсем хăйсен ĕçĕсем çинчен отчет туса пачĕç. Пухура хуçалăх ертӳçи тата специалистсем тухса каласнă хыççăн хуçалăхра аталану хумĕ вăйланса пыни палăрчĕ.

2006 çула Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлерĕ тесен те тĕрĕсех пулать. Кашни гектартан 23,8 ц тĕш-тырă пухса илнĕ. Ку вăл, 2005 çулпа танлаштарсан, гектартан та пĕтĕмĕшле тырă туса илесси те 35 процент ӳснине кăтартать. Кашни ĕнерен сĕт туса илесси 37 процент, пĕтĕмĕшле туса илнĕ сĕтĕн калăпăшĕ 62 процент ӳснĕ. Самăртма хупнă выльăхсен ӳт хушаслăхĕ малтанхи çул 259 граммпа танлашнă пулсан, иртнĕ çул 736 грама çитнĕ, 84 процент ӳснĕ. Пĕтĕмĕшле аш туса илесси 87 процент ӳснĕ. Кашни ĕнерен 3595 кг сĕт туса илнĕ, малтанхи çул 2631 кг пулнă.

Уй-хиртен тата выльăх-чĕрлĕх туса илнĕ продукцине сутса хуçалăх пĕтĕмпе 3 млн. 612 пин тенкĕ тупăш илнĕ. 2005 çулта çак кăтарту 1 млн. 942 пин пулнă. Тупăш илесси 84 процент ӳснĕ. Çав шутра тĕш-тырă сутса 739 пин тенкĕ (2005 çулта 396 пин тенкĕ), выльăх-чĕрлĕхрен 2 млн. 240 пин (2005 çулта 1млн.329 пин). Хуçалăх çулталăка 773 пин тенкĕлĕх таса тупăшпа вĕçленĕ. Ĕçлекенсен уйăхри вăтам ĕç укçи 2264 тенкĕпе танлашнă (2005 çулта 1577 тенкĕ), 44 процент ӳснĕ.

Малтанхи çулсенче хуçалăхран специалистсем, механизаторсем, выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем тухса кайса пĕтнĕ пулсан, 2006 çулта вĕсем пурте каялла таврăнса ĕçе кӳлĕннĕ. Иртнĕ çул хуçалăх 600 пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен çĕнĕ техника туяннă. Аякран пулăшу кĕтмесĕр, çирĕм çултан та аслă комбайнсене юсаса хута ярса тырă-пулă вăхăтра пухса кĕртнĕ. Нумай çул ӳсекен курăксене икшер хут çулса илсе хуçалăх выльăхĕсем валли те, ĕçлекенсене памалăх та, ытти хуçалăхсене сутмалăх та выльăх апачĕ хатĕрленĕ. Кӳршĕ хуçалăхра çĕр арендăна илсе 80 гектар çинче кĕр тырри акса хăварнă.

Хальхи вăхăтра хуçалăхра хĕрсех çур акине хатĕрленеççĕ, техникăна юсаççĕ. Акмалли кондиции ларнă вăрлăх çителĕклĕ. Çунтармалли-сĕрмелли материалсем валли 400 пин, удобрени валли 200 пин, запаслă пайсем валли 300 пин тенкĕ укçа куçарса хунă та ĕнтĕ, солярка турттарса килме тытăннă. Кăçалхи уй-хир ĕçĕсенче çунтармалли-сĕрмелли материалсемшĕн кулянмалли çук.

Хуçалăх ертӳçи П.Г. Ефимов кăçалхи плансене пăхса тухнă чухне выльăх-чĕрлĕх йышне хушасси пирки чарăнса тăчĕ. Çак йĕркесене çырнă вăхăтра кӳршĕ хуçалăхран 40 пуç ытла ĕне выльăх илсе те килнĕ. Сыснасем валли çуртне кĕçех йĕркене кĕртсе çитереççĕ. Малтанхи ертӳçĕ сыснасем тупăшлă мар тесе фермăна тĕп тунăччĕ. Çавăн пекех кăçал хуçалăх 20-30 гектар çĕр улми лартса хăварасшăн. Çĕр улми те хуçалăхра çитĕнтерме пăрахнăччĕ. Халĕ ун вăрлăхĕ пирки каласса татăлнă. Пахча-çимĕç лартассипе те каласу пулса иртрĕ. Малтанхи çул пахча-çимĕç сутса 12 пин тенкĕ укçа илнĕ пулсан, 2006 çулта вăл кăтарту 115 пин тенкĕпе танлашать. Ял хуçалăх культурисен структурине тата пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитерес енĕпе те туса ирттермелли ĕçсем нумай.

Пухура çавăн пекех устава улшăнусем кĕртсе, администрацип профком хушшинчи коллективлă договора çирĕплетрĕç. Пуху вĕçĕнче хуçалăх ертӳçи П.Г. Ефимов лайăх ĕçлекенсене Хисеп грамотисем тата укçан премисем пачĕ. Пуху ĕçне районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕ А.И. Павлов, район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Милютин хутшăнчĕç.

А.И. Павлов сăмах тухса каларĕ. Пуху хыççăн ял ĕçченĕсене Шупашкар артисчĕсем юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра çулталăкра пулса иртнĕ ырă улшăнусем хуçалăх ертӳçи, специалистсем, ĕçе хутшăнакансем тăрăшмасăр пулман. П.Г. Ефимов Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăха çулталăк кăна ертсе пырать. Çав хушăра вăл специалистсене, механизаторсене, выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсене явăçтарса çирĕп те шанчăклă ĕç коллективĕ чăмăртама пултарчĕ. Кооператив членĕсен хуçалăх малашлăхĕ пирки шанчăк çуралчĕ. Шанас килет, кăçалхи ял хуçалăх кăтартăвĕсем иртнĕ çулхинчен тата сумлăрах пулĕç.

Н. АНДРЕЕВ,
пенсионер, ĕç ветеранĕ.

Çур аки умĕн

Çĕр тислĕкпе пуян пулсан

Çĕр çинче ĕçлесе пурăнаканăн çакна лайăх пĕлмелле. Тислĕкпе çĕр пуян пулсан, тырă-пулă ăнса çитĕнет. Тырă-пулă çителĕклĕ чухне ашĕ те, сĕчĕ те, çăмарти те пулать. Паллах, вĕсем ăнсан, хуçалăх кассинче яланах укçа пулать. Çапла вара, хуçалăхра ĕçлесе пурăнакансене ĕçленĕшĕн уйăхсерен тӳлесе тăма хуçалăхăн майсем уçăлаççĕ.

Мĕнле усă кураççĕ-ха тислĕкпе паян хуçалăхсем? Тӳрех каламалла, çителĕксĕр. Статьяра манăн сăмахăм тислĕк çинчен пырать. Тислĕк тырă-пулăшăн пĕтĕмпех усăллă пултăр тетпĕр пулсан, ăна пахалăхлă хатĕрлеме нумай пĕлмелле тата нумай ĕçлемелле. Çĕрмен тислĕк усăллă мар. Мĕншĕн тесен çĕрмен тислĕкре тыр-пулăна аталанса çитĕнме азот çук. Эпĕ çакна çулленех асăрхаса тăратăп. Нумай хуçалăхра пуçлăхсем ĕçе тĕплĕн пăхса планламасăр, тислĕке уя кăларса салатса пăрахаççĕ. Çийĕнчех сухаласа тăпра айне тумасăр уйăх таран хĕвел айĕнче вырттарса пĕтĕмпех типĕтсе яраççĕ. Хуçасăрлăхпа тислĕке хакламасăр, юрăхсăра кăлараççĕ. Паллах, хĕвел айĕнче типсе вырттнипе тислĕкре азот юлмасть. Азотăн çĕр ăшĕнче пулмалла.

Фермăсенчен кăларса тислĕке çĕртессипе агрономсен чуна парса нумай ĕçлемелле. Минераллă удобренисем çине кăна шанмалла мар. Тислĕке нумайтарах агротехника хушнă пек хатĕрлесе, унпа усă курмалла.

Эпĕ лайăх астăватăп-ха "Знамя труда" колхоз председателĕ пулнă Е. Андреев (вăл халĕ пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. Унăн йывăр тăпри çăмăл пултăр) тислĕкпе мĕнле усă курнине. Вăл çапла калатчĕ: "Тислĕк вăл – пире çăкăр туса ларакан, унтан йĕрĕнмелле мар. Ăна кирлĕ пек хатĕрлесе усă курмалла". Тислĕкпе пĕлсе усă курнипе колхоз çулленех пуян тыр-пул çитĕнтернĕ.

Тĕрĕссипе каласан, тислĕкĕн хакĕ пĕчĕк мар. Калăпăр, ăна фермăсенчен кăларма хаклă электроэнергие тăкакласа транспортерсем ĕçлеççĕ. Купаланă çĕрте техника ĕçлет. Хир тăрăх салатнă çĕрте каллех техника ĕçлет. Сĕрмелли тата çунтармалли материалсем нумай тăкакланаççĕ. Тата ĕçленĕшĕн механизаторсене тӳлемелле.

Апла пулин те, тислĕке хакламанни курăнать хуçалăхсенче. Тислĕкпе çыхăннă пысăк тăкаксене, унпа пĕлсе усă курса, пуян тырпул туса илме, пулнă тăкаксене каялла тавăрма тăрăшмаççĕ. Шел пулин те, тислĕкпе пĕлсе усă курманнипе хуçалăхсем пысăк тăкак кураççĕ.

Эпĕ çакна лайăх астăватăп. Машинăпа трактор станцийĕсем ĕçленĕ вăхăтра колхозсемпе МТСсем хушшинче килĕшӳсем тăватчĕç. Унпа килĕшӳллĕн колхозсенчи тыр-пул тухăçĕшĕн пĕтĕмпех МТС явапла пулнă. Çавăнпа ун чухне çĕр ĕçĕнче çирĕп йĕрке пулнă. Çĕр çинче хальхи пек лакăм-тĕкĕмсемлĕ йăрансем пулман. Çĕр ĕç культури те яланах пысăк шайра пулнă. Тислĕкпе усă курассинче хальхи пек йĕркесĕрлĕх пулман.

Уй-хире кăларса купаланă тислĕке, ăна çĕртес шухăшпа, фермăсенче шыв вĕрилентерсе тислĕк куписем çине ярса çӳренĕ. Тислĕк куписем уйсенче пушар чухнехи евĕр мăкарланса çĕрсе азот пуха ларатчĕç. Халĕ вара ун пек мар. Тислĕк куписем шăнса лараççĕ те çĕрмеççĕ. Çулла вара çĕрмен тислĕке хире салатса пăрахса экономика енчен хуçалăха сиен кӳреççĕ. Ĕлĕк салатса пăрахнă тислĕке хальхи пек хĕвел айĕнче типĕтсе вырттарман, ăна салатнă хыççăнах тракторсемпе сухаласа суха касси айне тунă эпир.

Акă, пĕр тĕслĕх. Иртнĕ çулла пĕр хуçалăхра тислĕк салатса пăрахнă уйра пултăм эпĕ. Пăхатăп та, тислĕк пĕтĕмпех хĕвелпе типсе кайнă. Яла утрăм. Кĕтмен çĕртен агронома тĕл пултăм, хам курни пирки ăна каласа патăм. "Техника юсавлă мар, çумăр çусан тислĕк исленет", – хурав пулчĕ унран. Хĕвелпе типсе кайнă тислĕке, шыв сапса ислетсен те, усси пулмĕ çав. Агрономăн хуравне ĕненес пулсан, тислĕке салатса çĕре вăхăтра сухаласа хăварас шутпа хуçалăх пуçлăхĕсем техникăна хатĕрлеменни куç умне тухса тăчĕ.

Ман шутпа, çĕр тата тислĕк пирĕн пурнăçра пуянлăх пулаççĕ. Çавна шута илсе çĕр çинче пĕтĕм чуна парса ĕçлемелле пирĕн. Тислĕке хакласа, унпа пĕлсе усă курасчĕ.

Сăмахăма вĕçленĕ май эпĕ çакна асăнса хăварасшăн. Кураксем килчĕç. Паллах, ку вăл çур аки ĕçĕсем çывхарса килессине систерет. Пĕр хуçалăхри малта пыракан комбайнерсем мана çапла каласа пачĕç: "Çĕр сийĕ йăранлă пулнипе вырмара тырă çĕр çине нумай тăкăнса юлать". Апла пулсан, ял хуçалăх техникине вĕсем çĕр çине йăрансем ан туччăр тесе, юсав ĕçĕсене юсав виçисене çирĕп пăхăнса хатĕрлемелле. Паянхи куна хуçалăхсенче кĕркуннех юсанă техникăна тепĕр хут пăхса тухаççĕ.

Юлашкинчен хуçалăхсен пуçлăхĕсене эпĕ çакна каласшăн. Çур акине тухиччен вăхăт нумаях юлмарĕ. Çавна май çур акинче усă курмалли техникăна паянах хатĕрлеме тытăнасчĕ.

В. ИВАНОВ.

Кашмаш ялĕ.